К 84.89(=Чув)
Л63
Ч-37445

Ева
Лисина

# УЛĂХПИ



Национальная библиотека ЧР
4-037445

*Вăрçă çулĕсенче*
*лаша вырăнне ĕçленĕ, кайран*
*хĕне кайса вилнĕ*
*ĕнене — Жданкăна — асăнса*



К
К 84,89(=Чув)
Л 63

**Ева**
**Лисина**

# УЛĂХПИ



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2002

К 84,88 (2Чув)6-444

УДК 821.512.111 – 93
ББК 84 (2Рос–Чув) – 44
Л 63

4-37445
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ПРОВЕРЕНО
2010

**Лисина Е.Н.**
Л 63 Улăхпи: Повесть. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2002. – 40 с.

Пурнăçра ырă этем çеç мар, ырă вылььăх та тем пекех хаклă. Вĕсем пирĕн аса кĕрсе юлаççĕ. Автор хăй ачалăхĕнчи пĕр ĕнене, вăрçă вăхăтĕнче çынсемпе тан йывăрлăх тӳснĕскере, аса илет. Кайран çав ĕне сăнарĕ юмахри пек ыррăн курăнса пурнăçа илемлетет.

**ББК 84 (2Рос–Чув)–44**

© Чăваш кĕнеке издательстви, 2002
© Лисина Е.Н., 2002

ISBN 5-7670-1230-X



## ХАЛЕХ КАЯТĂП!

Хамăр хула урамĕпе пыраттăм. Ай-ай шăрăх — этем чăтмалла мар! Пурте сулхăна пытанаççĕ. Кур-ха, пĕри вĕтелекен шăрăхран хăрамасăр, ним пулман пек урам варрипе ыткăнса пырать. Ара, Çамрăк Юмахçă-çке ку! (Эсир, тен, юмахçă вăл яланах ватă пулакан тетĕр пулĕ, анчах ватти малтан çамрăк пулать, çавăнпа Çамрăк Юмахçă та пулмалла!)

— Итле-ха, — тетĕп ăна, — шăрăх, сывлама та çук!

— Яла каяс пулать, яла! Эп халь çеç пĕр ялтан килтĕм. Ырлăх унта!

— Ялĕ мĕн ятлăскер?

— Мĕнле пултăр — Улăхкасси!

— Хăш килĕнче чарăнса тăма юрать-ши?

Çамрăк Юмахçă малалла талпăнать, вырăнтан хускалнă трамвая çитсех-çитсех пырать, чупнă май мана ăнлантарать:

— Ан пӑшӑрхан! Унта сана кӗтсех илеҫҫӗ! Паянах кай!

Мӗнех ара! Эпӗ те килелле чуптартӑм: карттӑ ҫине пӑхас-ха — ҫавӑн пек ял пур-и? Пур, пур ун пекки — ытлашши инҫех те мар, питех ҫывӑхах та мар, ҫитме пулать! Халех каятӑп!



## ҪИТРӖМ ТЕ!

Малтан эп пуйӑспа кайрӑм. Кайран автобус ҫине куҫса лартӑм. Чӳречерен пӑхатӑп та — шав вӑрман, шав уй-хир тӑсӑлать. Акӑ улӑх курӑнса кайрӗ! Эпӗ ура ҫине сиксе тӑтӑм.

— Тен, Улӑхкасси ку? — тетӗп.

— Лар-ха, хӗрӗм, лар, — тет пӗр карчӑк, — «тен» тетӗн пулсан Улӑхкасси мар ку. Улӑхкассине кирек кам та тӳрех палласа илет, никам та «тен» тесе иккӗленмест.

Малаллах каятпӑр. Икӗ енӗпе те йӗтӗн хирӗ, ун ҫийӗ хумлӑн-хумлӑн чӳхенсе выртакан шупка ешӗл пурҫӑн пек курӑнать. Ҫул тӑвалла хӑпарать. Автобус сӑрт тӑррине ҫитсен аялта талккӑшпе сарӑлса выртакан улӑх курӑнса каять. Ун хӗрринче, капмар йывӑҫсем айӗнче, пӗчӗк ҫеҫҫӗ ял ларать. Халь ӗнтӗ никамран та ыйтса тӑмастӑп, тӳрех алӑк патнелле утатӑп.

— Калап-иҫ Улӑхкассине кирек кам та тӳрех палласа илет тесе, ак ҫитрӗн те, хӗрӗм, — илтӗнсе юлать ман хыҫран кӑмӑллӑ ӑшӑ сасӑ.



## КӖТСЕ ИЛЕКЕН ПУЛСАН АВАН ҪАВ!

Улӑх хӗррипе утнӑ чух мана акӑ мӗскер аса килчӗ: ача чухне мана «хӑмла шалҫи» тесе йӗкӗлтетчӗҫ. Ку ача чухне пулнӑ-ха. Кайран эп тата ӳснӗ вӗт-ха. Ӑнкаратӑр-и, мӗнле тӑрнаккай эп! Кунти курӑк вара манран та ҫӳллӗ!

Хулара асăрхаманни-курманни халь куçа тăрăнать. Пурте — юнашар. Пурте куçа çиет, пуçа унталла та кунталла пăркалантарать, хăлхана вылянтарать. Акă хĕвелĕ, анаçалла самаях сулăннă пулин те, кăнтăрлахи пекех çутатать. Акă тӳпенелле пăрлатса хăпаракан тăри ушкăнĕ. Курăкĕ, курăкĕ вара — пурçăн шерепесем, пыл шăрши саракан хĕрлĕ-сенкер-кĕрен-шурă пуçсем...

Кăштахран ялĕ те курăнса кайрĕ. Çӳллĕ йывăçĕсем йăмра иккен. Варкăш çил килет те, çулçăсем шăпăрр! тăваççĕ, симĕс йăмра вара кĕмĕл тĕслĕн çутала-çутала илет.

Ял хĕрринчи кил умне çитрĕм те тĕлĕннипе тăп чарăнса тăтăм. Хапха умĕнче çăлтăр хушка çамкаллă хĕрлĕ ĕне тăрать, ун тавра тем-тем тĕслĕ лĕпĕш пĕлĕт пек çаврăнать, асамат кĕперĕ евĕр ункăланать. Эсир кун пеккине курнă пулĕ-ха, эпĕ вара пуçласа куратăп та çавăнпа ним калама та пĕлместĕп.

Ĕне мана саламлать:

— Килех Улăхкассине! Ак сан çурту. Пурăн, ĕçле.

Аптăраса та тĕлĕнсе кайнипе эп тавах теме те ăнкараймарăм. Эпĕ тăна кĕнĕ çĕре ĕне таçтах çитнĕ: ав улăхпа пырать, патша пек васкамасăр, хуллен утать, ун умĕнче тĕрлĕ тĕслĕ пĕлĕт çаврăнать...



## ПАЛЛАШАТĂП

Каç пулчĕ, тăххăрмĕш сехет, анчах урамра вулама та, çырма та пулать. Ялпа паллашмалла кăштах уçăлса çӳрем-ха терĕм.

Эп хамăн кил (унта пурăнатăп пулсан ман кил ĕнтĕ вăл!) ял хĕрринчи пуль тенĕччĕ. Ун пек мар иккен, кунти кашни киле хĕрринчи теме пулать, мĕншĕн тесен çуртсем урам

тăрăх йёркипе мар, ăçта килчĕ унта ларса тухнă, анчах кашниййĕ меллĕ те илемлĕ вырăн суйласа илнĕ.

Ялне ахальтен мар Улăхкасси тенĕ-мĕн: ăна пур енчен те улăх хупăрлать. Улăхĕ тата ялах «кĕрет», кунта пурăнакансем унран хăйсен пахчи-сачĕсене çеç хӳтĕлеççĕ пулас, ытти чух ирĕк параççĕ, ун çулне нихăш енчен те пӳлмеççĕ: ӳс-ӳс, улăх! Çавăнпа çуртсем хушшинче те çаран ӳсет. Ав пĕр старикпе икĕ хĕрарăм чашлаттарса утă çулаççĕ.

— Вăй патăр! — саламлатăп ĕçлекенсене.

Вĕсем самантлăха çулма чарăнса манпа калаçса илеççĕ.

— Тавах! — хавассăн хуравлать ватти.

— Тавах, тавах, — теççĕ хĕрарăмĕсем тараватлăн.

Виççĕшĕн те сăнĕ-пичĕ хĕвелпе пиçсе хуралнă, виççĕшĕн те куçĕсем ăшшăн кулаççĕ.

— Ай, каçа юлса ĕçлетĕр-çке, тăххăрмĕш сехет! — тĕлĕнетĕп эпĕ.

— Ара, çак каçа юлни пулать-и? — тет ватăрах хĕрарăмĕ тарпа йĕпеннĕ тутăрне тӳрлеткелесе. — Ак Кавĕрле пичей ĕнер вуннăччен çулчĕ, унăн тăваттăрах тăрас пулать тата, вăл кĕтӳ кĕтет.

— Хĕлле çывăрăп-ха, халь çывăрсан нимсĕр тăрса юлма пулать, — тет типшĕм, анчах çирĕп вăй-халлă курăнакан Кавĕрле пичче. — Ĕнене хĕл каçарма сахалтан та çĕр пăт утă кирлĕ, эп тата вăкăрпа тына та усратăп.

Ак ĕнтĕ кĕтӳç мана хăйсем патне чĕнет:

— Пирĕн пата сĕт илме пыр. Эп карчăка каласа хурăп. Эпир ав çав çуртра пурăнатпăр, — шатрун çурт енне аллипе тăсса кăтартать вăл.

— Сире пирĕн ялта лайăх пулать! — теççĕ хĕрарăмсем.

Мана халех калама çук аван!





## МАЛАЛЛА ПАЛЛАШАТĂП

Эпĕ малалла уттартăм. Курăк пуснă сукмакпа сулахаялла пăрăнтăм та решетке карта хушшипе ытарайми илем курăнса кайнăран чарăнса тăтăм.

— Хĕрĕм, мĕн çав териех хытă пăхатăн? — илтĕнсе кайрĕ хĕрарăм сасси.

Ман хыçра кĕвентепе икĕ витре шыв йăтнă кинемей тăра парать — чăлт шурă тутăр çыхнă тăп-тăпăлкка кинемей.

— Йăранĕсене ытармалла мар.

— Ара, вĕсене пĕчĕк ачана пăхнă пек пăхатпăр та... — сăмахне пат татрĕ те вăл витрисене çĕре лартса пусĕпе

сарă хапхаллă çуртăн уçă чӳречи еннелле сулчĕ. — Итлесе пăх-ха! Эс ăслă-пуçлă çын, ăнланаятăн-и?

Эпĕ тăнлатăп.

— Шăтар, шăтар кашни çырлине... — илтĕнет çинçе те хытă сасă.

— Ăнланатăн-и эс? — ыйтрĕ каллех кинемей.

— Ăнланаймарăм-ха... Çырлана шăтараççĕ-и? Йĕппе-и? Мĕншĕн шăтараççĕ?

— Ара... Ман хĕрĕм Уçтине виçĕ çул аякри çĕршывра, чикĕ леш енче ĕçлесе пурăнчĕ. Унтан таврăнчĕ те ăнланмалла мар калаçать, темскерле сăмахсем хуша-хуша хурать. Лайăх чăмласа çи тесшĕн пуль. Сантăр çырлине кап-кап хыпать пуль те.

— Чăмлап, апай, чăмлап, — илтĕнчĕ арçын ача сасси.

— Каларăм-иç. Ку — манăн мăнукăм Сантăр, — ăнлантарчĕ кинемей. — Ашшĕ-амăшĕ чикĕ леш енне кайсан ăна ман патăма хăварнăччĕ.

Пӳртри калаçу малалла илтĕнчĕ:

— Александр, эп сана мĕн терĕм, «апай» мар, урăхла калас пулать терĕм.

— Эп хамăр ялти пек калап — а-пай.

— Сантăр маттур вăл! — кулса илчĕ кинемей. — Хăй тĕрĕс тăватăп тесе шутлать пулсан ăна никам та урăхла тутараймасть. Амăшĕ те. Сантăр хăй кукашшĕне хунă: ман хуçа вара — Танюк пичей — ялти чи тĕреклĕ хресчен шутланнă. Сантăр та çавăн пек пулать — эп кăна пĕлсех тăратăп!

Шăкăлтатсах калаçрăмăр. Кинемее Кулюк аппа тесе чĕнеççĕ-мĕн.

— Мĕн те пулин кирлĕ пулсан тӳрех ман пата чупса кил, — терĕ вăл мана уйрăлнă чух.





## ЯТСĂРРИ

Кулюк аппапа калаçса тăнă хушăра вĕсен алкум картлашки çинче, хĕвел шевли ӳкнĕ вырăнта, пĕчĕк çеççĕ йытă çури ларатчĕ. Те ӳпре-шăнана, те вĕлле хуртне хăвалатчĕ вăл — пĕрре пĕр урипе, тепре тепĕр урипе çапать те çапать сывлăша.

— Ку çура мĕн ятлă? — ыйтрăм эпĕ.

— Ятсăр-ха, — терĕ Кулюк аппа. — Пысăкланчĕ ĕнтĕ, ниепле те ят тупса параймастпăр.

— Ятсăрри, кил кунта! — терĕм çав çурана, вăл — уçă чун! — найк! туса илчĕ те картлашка çинчен йăраланса анса ман пата чупса пычĕ. Пĕчĕкскер çĕмĕрт çырли пек хуп-хура куçĕпе тĕнче çине, ман çине хавассăн та хавхалануллăн пăхать.

— Ятсăрри, атя манпа пĕрле!

Çура ман хыçран тĕпĕлтетрĕ. Эп чиперех утса пыратăпха, вăл вара тикĕссĕн чупаймасть: пысăк хырăмĕ ăна пĕрре пĕр енне, тепре тепĕр енне тайăлтарать те вăл аякĕ çине кая-кая ӳкет.

Çавах ялтан тухрăмăр-ха, вăрман тăрăхĕ патне çитрĕмĕр. Çӳлте — ешĕл те симĕс çулçă купи, аялта — сар çип утипе кĕрен хĕлхен ялтравĕ, — акă еплерех вăрман тăрăхĕ ку. Ун хыçĕнчен анлă хир пуçланать. Мĕн ӳсет-ши кунта — ыраш-ши, тулă-ши, урпа-ши? Пучахĕ пулнă пулсан тӳрех ăнкарса илеттĕм те-ха, анчах пĕр пучах та курăнмасть.

— Ятсăрри, кунта мĕн ӳсет? — ыйтрăм çурараран.

Вăл та пĕлмерĕ çав. Юрĕ, ăна каçарма пулать-ха, вăл икĕ уйăх та тултарман пулĕ-ха, эпĕ вара... ай-ай-ай! çак çутă тĕнчере миçе çул пурăнатăп!

Эп васкамасăр утрăм: çурана ӳкме-тăма, мана хăваласа çитме вăхăт кирлĕ-çке.

Малтан шăппăн кăна утаттăмăрччĕ. Унтан, пĕр кĕтмен çĕртен, ним сăлтавсăр-мĕнсĕр Ятсăрри нăйкăшма пуçларĕ. Нăшăклатнă пекех. Кайран мăшт пулчĕ. Çаврăнса пăхрăм та — урисене çӳлелле кăнтарса месерле выртса парать. «Мана йăт-ха!» тенине пĕлтерет ĕнтĕ ку.

Алла илтĕм те çавна, вăл савăннипе ман пит-куçа çулласа пĕтерчĕ, кĕçех хăлхана çыртса тататчĕ. Çĕре ятăм та — каллех унчченхине пуçларĕ, сасси те йĕрмĕш ачанни пек: «Киле атя, киле атя!» — тесе нăйăлтатнă пекех. Йăтрăм та часрах килелле çаврăнтăм.

Малтан хам киле кĕтĕм. Çурана çĕре ятăм. Вăл, савăнса ӳкнĕскер, чупса пырса çурт стени çумне тĕршĕнчĕ. Еплерех хĕпĕртени пичĕ-куçĕнченех курăнать. «Килтех лайăх çав!» — терĕ пулас хăй ăшĕнче. Унтан, меллĕрех вырнаçса выртас тесе-ши, ун-кун пăхкаласа илчĕ — «ман алкум ăçта?», «ман картлашка ăçта?» Çук вĕсем, таçта кайса кĕнĕ! Вара вăл пĕчĕк ача йĕнĕ пек хурлăхлăн нăйăклатса ячĕ. Эпĕ кăна тӳссе тăраймарăм, ăна ярса тытрăм та Кулюк аппасем патне чупрăм. Çурана вĕсен алкум картлашки çине ятăм. Вăл малтан сăмсипе нăш! туртса илчĕ, унтан лăштах кайса чап-чап тутарчĕ те ман куç умĕнчех лĕпсĕр çывăрса кайрĕ.



## ПУҪ ӐНКАРАЙМИ ЁҪ

Тӳрех калам сире: эп пурне те пӗлме юрататакан ҫын, мана анне ҫавӑн пек ҫуратса янӑ ёнтӗ. Мӗн те пулин пӗлместӗп пулсан ҫавна пӗлмесӗр, тӗлли-паллине тупмасӑр лӑпланаймастӑп. Тепӗр ирхине куҫа уҫнӑ-уҫманах ҫапла шутласа илтӗм: «Ҫапах та ҫав хирте мӗн ӳсет-ши?»

Эп апат та ҫисе тӑмарӑм, тӳрех уя ҫул тытрӑм.

Малтан эп урӑх хире лекрӗм пуль тесе шутларӑм — ара, кунта сӗлӗ ӳсет-вӗт: ӑна шерепеллӗ пусӗнчен палласа илтӗм. Тавраналла пӑхрӑм та — ку ёнерхи хирех-ҫке, эпир кунта Ятсӑррипе иксӗмӗр уҫӑлса ҫӳренӗччӗ.

Апла пулсан... Апла пулсан ял ҫывӑрнӑ вӑхӑтра, эп ыйхӑ тӑснӑ вӑхӑтра ҫак хир канӑҫ мӗнне пӗлмесӗр ёҫленӗ. Ёҫӗ — пуҫ кӑларни! — мӗнешкел тата: пӗтӗм халӑха, пӗтӗм выльӑх-чӗрлӗхе, пӗр сӑмахпа каласан, пӗтӗм тӗнчене кирлӗ ёҫ.

Хӑҫан пуҫланчӗ-ши вӑл: ҫӗр варринче-ши е каярах, шурӑмпуҫ тухсан-ши?

Мӗнле сас илтӗнетчӗ-ши тата кунта: чӑштӑр-чӑштӑр-и, каш-каш-и е пӗр сасӑ та ҫукчӗ-ши?

Шерепе пуҫсем мӗнле тухрӗҫ-ши: хуллен-хуллен е, вӑй пухса, пӗррех карт! туртӑнса илчӗҫ-ши? Туни мӗн турӗ-ши тата: чӗтрерӗ-ши, авӑнчӗ-ши, пулӑшрӗ-ши шерепине? Ара, ҫут тӗнчене ҫуралма ҫӑмӑл мар вӗт!

Хирӗ мӗн турӗ-ши? Шӑп ларчӗ-ши е пӗтӗм тавралӑх вырӑнтан тапраннӑ пек хумханчӗ-ши?

Ёҫӗ хӑҫан вӗҫленчӗ-ши: хӗвел тухнӑ тӗле-ши е путене вӑраннӑ сехетре-ши?

Тем-тем тĕрлĕ шухăшларăм пулин те, ман пуҫ ҫакăн пек ĕҫе ăнкараймарĕ. Ара, эп нихăҫан та ҫакăн пек аслă ĕҫ туса курман та, ăҫтан ăнкараям-ха?

Тата ҫакна калама маннă: эп авалхи йăласене хисеплетĕп. Халь, симĕс шерепене (пурҫăн пек ҫемҫе вăл, кăшт нӳрлĕрех тата — чим-ха, ĕҫле-ĕҫле тарламан-ши вăл?) аллăмпа сĕртĕннĕ май, пĕр йăлана аса илтĕм. Тырă пуҫ кăларнă чух кăшкăрма та, шаккама та юрамасть вĕт. Уй-хир йывăр ĕҫе пикеннĕ, ун пек чухне ăна никамăн та чăрмантармалла мар. Лайăх йăла мар-и ҫакă? Ĕҫ тунă чух ахăрашни-тĕрткелешни пире кансĕрлет-ҫке. Уй-хиршĕн те ҫавах ĕнтĕ вăл.

Ĕнер эпир кунта Ятсăррипе иксĕмĕр пулнăччĕ, юрать-ха шăп ҫӳрерĕмĕр. Ятсăрри кăштах нăйкăшрĕ-ха вăл... Ача нăйкăшни, каҫарăр та... йытă ҫури нăйкăшни темех мар ĕнтĕ. Вăл хире нимĕнле те чăрмантарайман. Хирĕ ҫакна илтрĕ пулсан та кулса ҫеҫ илчĕ пулĕ. Пысăк ĕҫ умĕн — пуҫ кăларас умĕн — кулса илни пулăшма ҫеҫ пултарнă ăна.



## ТĔРЕКЛĔ ХУҪА ӲСЕТ!

Хăйĕн ĕҫĕпе шалт тĕлĕнтерсе янă хиртен эп пĕртен-пĕр шухăш-кăмăлпа таврăнтăм: манăн та часрах ĕҫе пикенес! Ара, эп кунта канма ҫеҫ килмен вĕт, мана та ĕҫ кĕтет — пĕр юмах куҫармалла.

Темиҫе сехет ĕҫлесе ларнă хыҫҫăн картишне тухрăм. Мĕнле ырă та илемлĕ кунта: ура айĕнче — ҫемҫе курăк, пуҫ тĕлĕнче — яка пĕлĕтсем тата чăй-чăй туса вĕҫекен чĕкеҫсем. Сĕтел кăна кирлĕ, ăна пĕр-пĕр йывăҫ айне вырнаҫтармалла та тултах ĕҫлесе ларма пулать. Тен, ăна ҫак хыр айне лартас? Хам сĕтеле ăҫтарах вырнаҫтарсан лайăхрах-ши тесе тăраттăм, ҫурăм хыҫĕнче ача сасси илтĕнсе кайрĕ:

— Эсир мĕскер тăватăр?

Ҫавӑнса пӑхрӑм. Ман умра кӑн-кӑвак куҫлӑ, сарӑ шурӑ ҫӳҫлӗ арҫын ача тӑра парать. Пӗр ҫиччӗ-саккӑрта пулӗ.

— Ҫав хыр ҫине пӑхатӑп-ха, — терӗм эпӗ.

— Вӑл хыр мар, яхта.

— Мӗнле хыр мар, хыр! — хирӗҫлерӗм эпӗ.

— Эп хамӑр ялти пек калап — ях-та!

Умра кам тӑнине тӳрех тавҫӑрса илтӗм.

— Аван-и, Сантӑр! — терӗм.

— Эсир ман ята ӑҫтан пӗлетӗр?

— Сан ятна ҫамку ҫине ҫырса хунӑ.

Ку ача хӑй ҫамкине хыпашласа пӑхмӗ-ши тенӗччӗ те, асту, хӑнк та тумарӗ.

— Ман унта мӑкӑль ҫеҫ.

— Э-э, ҫапӑҫатӑн эппин?

— Кирлӗ чух ҫапӑҫатӑп.

Пӗр хушӑ нимӗн те чӗнмерӗмӗр. Ман ку ачана калаҫтарасах килчӗ.

— Эп эс ӑҫта пурӑннине те пӗлетӗп, — терӗм те Кулюк аппа ҫурчӗ енне кӑтартрӑм. — Ав ҫав ҫуртра!

— Унта мар! — касса татрӗ ача. — Унта ман кил-йыш — кукамайпа апай — пурӑнать. Эп хам ҫавӑнта пурӑнатӑп! — вӑл ҫӗр улми пахчи хыҫӗнчи лӑпӑска хурӑнсем хушшинчен кӑшт ҫеҫ курӑнакан тӗмеске еннелле аллине тӑсрӗ.

— Э-э, сан унта штаб-квартира пулӗ-ха?

— Штаб-квартира ООНӑн пулать, эп ООН мар, эп — разведчик, ҫавӑнпа кӑшшавуйра пурӑнатӑп.

— Ӑҫта? Мӗнле кӑшшавуй? Эс ӳплере тесшӗнччӗ пулӗ-ха?

— Эп хамӑр ялти пек калап — кӑш-ша-вуй.

Каллех чӗнмесӗр тӑтӑмӑр. Сӑмах май каласан ача чухне эпӗ те разведчик пулма ӗмӗтленеттӗм. Ун чухне тискер вӑрҫӑ кӗрлетчӗ. Эпӗ разведчик пулсан ҫав вӑрҫӑ питӗ хӑвӑрт вӗҫленессӗн, эпир ҫӗнтерессӗн туйӑнатчӗ. Сантӑра ҫакӑн ҫинчен каласа патӑм та вӑл мана сӑнаса-сӑнаса, пуҫ тӳпинчен пуҫласа ура тупанне ҫитиччен тӗсесе пӑхрӗ те пуҫне пӑркаласа илчӗ:

— Сиртен мĕн разведчикĕ пулайтăр? Епле тăрнаккай — çухрăмранах курăнатăр! Ун пеккине тӳрех асăрхаççĕ те çавăнтах персе пăрахаççĕ!

Çапла калаччăр-ха сан çинчен — лайăх-и итлесе тăма? Çитменнине тата ку ача шăхăркалама пуçларĕ — разведчиксем пĕр-пĕрне акă еплерех систереççĕ тесшĕн-ши? Юрĕ, юрĕ, разведчик пулаймарăм пулсан шăхăрас тĕлĕшпе вара такамран та ирттереттĕм-ха, хам астăвасса мана пĕр арçын ача та çĕнтерейместчĕ... Ак ик пӳрнене çăвара чикесси çеç... Ши-и! шăхăртăм та — пӳрт çумĕнчи хыр-яхта çинче ларакан кайăк ушкăнĕ сехри хăпнипе чилетсе-чăйлатса урăх çĕре вĕçсе кайрĕ. Сантăр та анраса кайрĕ пулмалла. Ăçтан пĕлсе çитерен вăл ачана, тен, анрамарĕ те пуль... Ун пек-и, кун пек-и те, анчах вăл ман çине питĕ-питĕ хисеплесе пăхса илчĕ те тĕлĕнмелле сăмах персе ячĕ:

— Сана кам кĕтсе илчĕ — ĕне-и?

Эп хĕпĕртесех кайрăм — асамлă ĕне йĕрĕ çине ӳкрĕм пулмалла! Паллах, тӳрех ыйтма-тĕпчеме пуçларăм, анчах ман ыйтусене хирĕç Сантăр ялан пĕр евĕрлĕ хуравларĕ:

— Ху курнă, ху пĕлетĕн.

Темскершĕн вăл мана «эсĕ» теме пуçларĕ. Ĕне çинчен калаçма чарăнсанах каллех «эсир» тет.

Сантăрпа иксĕмĕр пӳртрен пĕчĕк сĕтел йăтса тухса хыр айне лартрăмăр. Кайран чей ĕçрĕмĕр. Чей ĕçнĕ хушăра Сантăр мана йăпатма тăрăшрĕ:

— Эсир ан хуйхăрăр: разведка — хĕрарăм ĕçĕ мар вăл, арçын ĕçĕ.

— Эппин пирĕн, хĕрарăмсен, мĕн тумалла-ши?

— Кукăль пĕçермелле. Ача-пăча пăхса ӳстермелле.

— Çавă çеç-и?

— Мĕнле «çавă çеç-и»? Пĕчĕк ĕç мар ку. Ача-пăча пăхас тесен тĕнчере мĕн пур, çавна пурне те пĕлес пулать.

Ай, пĕтерет ку ача! Çирĕп хресчен пуласскер тĕрĕсех калать-и тен?



## ХЁВЕЛПЕ ÇУМĂР ХУШШИНЧЕ

Тёлёнмелле кунсем тăраççĕ. Иртенпех хĕвел хĕртет. Часах ак тӳпене кăвак шĕвĕ пĕлĕт карса илет те çумăр пуçланать. Ку — васкакан çумăр: шăпăр-р-шăпăр-р-шăпăр-р! туса илет те хăвăрттăн чарăнать. Юлашки тумламĕ ӳкиччен асамат кĕперĕ тухать — сарлака та ялтăркка вăл. Каллех хĕвел çутатса ярать. Йĕпе курăк хушшинче шăрчăксем чăрăлтатаççĕ. Кур — шур пĕлĕтех тĕксĕмленсе-тĕксĕмленсе пырать те хĕвел пăхса тăнă хушăрах шултăра çумăр шапăртатса иртет. Вăл алхасакан ача пек выляса-кулса илчĕ те куçран çухалчĕ. Халь ĕнтĕ мĕн каç пуличченех хĕвел çиçет. Шăрăх. Кирек мĕне тĕкĕн — вĕри çапать. Анчах пĕр курăк та, пĕр çулçă та шанмасть, вĕсем, икĕ хутчен çумăрпа çăвăннăскерсем, сиплĕ шыв ĕçнĕскерсем, тăнк кăна лараççĕ. Ку çеç мар-ха, ырă пулăшу тепре çитет: йывăççем шăпăлтатса илеççĕ, улăх хумханма-чӳхенме пуçлать, вара çумăр пуçланать. Ку çумăрĕ — ĕçченскер, вăл лăпкăн, васкамасăр, пусăрăнса ĕçлет, пĕтĕм çĕре тăрантармасăр, пĕтĕм шăтăк-путăка, лакăма шыв тултармасăр чарăнмасть. Пĕррехинче çак çумăр пирки Кулюк аппа:

— Ай мăнтарăн! Мĕнле таса, мĕнле илемлĕ ĕçлет — ман хуçа, Танюк пичей, çапла ĕçлетчĕ! — терĕ. — Пăх-ха, пăх, мĕнле ырă та уçă кăмăллă вăл, çуман кĕтес хăвармасть!

Ĕнтĕ икĕ эрне хушши çапла пурăнатпăр. Кулюк аппа кăçал улма-çырла пĕрин хыççăн тепри мар, пурте пĕр харăс пиçсе çитеççĕ тет. Чăнах, чиепе хĕрлĕ хурлăхан пĕрле пиçсе çитрĕç. Ĕнер Кавĕрле пичче вăрмантан пĕр карттус хура çырла татса килетчĕ. Мана курчĕ те: «Аллуна тăс-ха», — терĕ, вара йĕкĕр ывăç тулли хура çырла ярса пачĕ — вăрман тутипе сулхăнне аса илтерекен тап-таса çырла. «Хăмла

çырли те пиçнĕ!» — терĕ кĕтӳçĕ. Эп тĕлĕнсех кайрăм: ара, виçĕм кун çеç вăрманта пулнăччĕ, халь кăна тĕвĕленнĕ евĕрлĕ симĕс çырлана курсан: «Эх, кунтан кайиччен тутанса пăхасси пулмарĕ иккен!» — тесе кулянса илнĕччĕ. Эп çапла тĕлĕннинчен Кавĕрле пичче кулса илчĕ. Чăнах, кунне виç-çĕ-тăваттă çумăр çăвать пулсан, хĕвелпе çумăр хушшинче пурăнатпăр пулсан тем те кĕтме пулать. Ыранах вăрмана каятăп!



## ЯТ ХУТĂМĂР

Сантăр темле ĕçлĕ çын пек хыпаланса чупса килчĕ те урамранах кăшкăрчĕ:

— Ятсăррин ятне улăштарасшăн! Кукамай каларĕ, ĕçе хăй татса патăр терĕ!

— «Хăй» кам вăл? Йытă çури-и?

— Йытă çури мар, эсир! Ăна эсир Ятсăрри тесе чĕнетĕр вĕт? Кукамай: «Халь ĕçе хăй татса патăр, йытă çурине çав ятран сивĕттĕр», — терĕ.

— Эс те çапла шутлатăн-и?

— Эп ун пек шутламастăп. Кукамай ахалех пăтратать: Ятсăрри халь урăх ята йышăнмасть, ăна çакă кăмăла каять.

Сантăрпа пĕрлех уттартăм ĕнтĕ. Кулюк аппа çилленнĕччĕ.

— Пăх-ха эс ăна, ĕретлĕ ят тупса патăмăр, вăл ăнланмана перет.

— Мĕнле ят патăр-ха? — ыйтатăп эпĕ: ара, пĕлес ки-лет-çке — икĕ уйăх ят суйларĕç пулсан мĕнешкел чаплине тупрĕç пулĕ!

— Хураçка ятлă хутăмăр, — мăнкăмăллăн хуравлать Кулюк аппа. — Уçтине темĕскерле ят сĕнчĕ те килĕштермерĕм... Сантăр, апу мĕнле чĕнесшĕнччĕ-ха ăна?

— Доминик.

— Ара... Вăл урăм-сурăм ята тӳрех пăрахăçларăм: пирĕн йыттăн урăх çĕрте пурăнмалла мар, хамăр улăхра чупса çӳремелле. Авалхи чыслă ят парас терĕм. Эп ăна: «Хураçка! Хураçка!» — тесе чĕнетĕп, вăл пур илтмĕш тăвать, «Ятсăрри» тесенех картлашка çинчен сикет. Çапла чĕнсен унтан вăрă-хурах та хăрамасть вĕт.

— Вăрă-хурах нумай-и кунта?

— Ытти çĕрте пур теççĕ, пирĕн ĕмĕрте пулман, хапха-алăк яланах уçă, нихăçан та питĕрмен.

— Апла вăрă-хурах пирки пăшăрханмалли çук.

— Ара, унтан кулма пуçлаç вĕт?

— Кам кулать? Йытă качка-и? Пач урăхла пулать ак. Кулма мар, хисеплеме пуçлаç ăна! Атту ялан Хураçка та Кампур, вăл ятсем ĕнтĕ йăлăхтарсах çитерне!

— Эс пустуй ан калаç: йăлана кĕнĕ япала аван-ха вăл, унтан лайăхраххине тупаймастăн. «Ятсăрри»... Ара, вăл тăлăх ача мар вĕт!

— Каларăр та — «тăлăх ача»! Тăлăх выльăх карта пуçĕ пулнă, тăлăх ача ял пуçĕ пулнă теççĕ, Кулюк аппа!

Кинемей кăмăлĕ майĕпен-майĕпен çаврăна пуçларĕ.

— Карта пуçĕ! Вăл карта пуçĕ пуласси тахçанах паллă! — унтан вăл теме ĕмĕтленсе хăй тĕллĕн каласа хучĕ: — Тен, вăл Улăхпипе те туслашмĕ-и-ха?..

— Мĕнле Улăхпипе? — ыйтрăм эпĕ тӳрех. — Сантăр, мĕнле Улăхпипе?

Кукамăшĕ те, мăнукĕ те мана илтмĕш пулчĕç, Кулюк аппа калаçăва часрах Ятсăрри çине куçарчĕ:

— Юрĕ, хăйне килĕшсен çаплах пултăр! Асту, Ятсăрри, ятна ан яр вара!



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
4-37445



## УЛĂХПИ

Манăн кун ялан тенĕ пекех пĕрешкел пуҫланать: ҫывăрса тăратăп та кантăк каррине уҫатăп, ҫавăн чух улăх хĕррипе, курăк тăррипе чалт-чалт сиксе килекен шупкалнă карттус курăнса каять. Кăштахран Кавĕрле пичче кантăкран шаккать:

— Хĕрĕм, сывах-и?

— Сывă-ха, Кавĕрле пичче, сывă!

— Юрать, юрать апла! Эп кĕтӳ кĕтме каяп! Ман карчăк сана сĕт илме килтĕр терĕ!

Карчăкĕ, Маттюк аппа, ҫӳллĕ те хулăн саслă тăн-тăн хĕрарăм, мана ялан пĕр ыйту парать: «Сана ирхи сĕт килĕшет-и, каҫхи сĕт килĕшет-и?» Маншăн пулсан иккĕшĕ те тутлă. Ĕҫе Маттюк аппа хăех татса парать: «Ирхинехине ил, ман хуҫа ирхинехине ҫеҫ ĕҫет».

Кĕтӳҫ килне эп сĕт илме ҫеҫ ҫӳреместĕп-ха, ман тата пĕр вăрттăн ĕмĕт пур: вĕсен хĕрлĕ ĕни манпа калаҫа пуҫламĕши тетĕп. Паллах, эп хама тараватлă хуҫа пек кĕтсе илнĕ асамлă ĕнене асрах тытатăп, курасахчĕ-ха ăна, тав тăвасчĕ: ара, эп ытарайми хăтлă ҫурта лекрĕм-ҫке, унта пурăнма та,

ĕçлеме те кăмăллă. Çав ĕне таçта çакăнтах çӳремелле, кун пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Эп ĕнтĕ ялти мĕн пур ĕнене тĕрĕслесе тухрăм: кашни килте ĕне усраççĕ, вĕсенчен пĕри — кĕтӳç ĕни — тĕлĕнтермĕш ĕнене аса илтерет: тĕсĕ те çавăн пек, çамки çинче çăлтăр хушки те пур. Пĕррехинче чăтаймарăм, пытăм та каларăм чĕлхе вĕçĕнчине: «Тавах сана! Пĕтĕм чунтан тав тăватăп!» Вăл пур хӳрипе енчен енне сулласа мана мăйракипе тĕллерĕ! Çук, ку леш ĕне мар! Çук-çук, вăл мар! Кунăн ав куçĕ те хăнчăр. Ара, лешĕ пынă чухне улăх çиййĕпе икĕ хĕвел шуса пынăн туйăнатчĕ! Кунăн çăлтăр хушки те тĕксĕм, лешĕн — Хуркайăк çулĕнчи чăлт шурă çăлтăр пек! Çук, çук, ку лешĕн яхăнне те пыраймасть!

Пĕрех куртăм вăл ĕнене. Ку ĕç ирхинехи çумăр хыççăн пĕр харăс икĕ асамат кĕперĕ тухнă кун пулса иртрĕ. Шăп та шай вун икĕ сехетре. Эп юрлакан сехет çакса çӳретĕп. Çав сехет талăкра икĕ хутчен — кăнтăр варринче тата çĕр варринче — юрласа илет. Çавăн чух шăпах сехет юрлама пуçларĕ те эп темскершĕн кантăкран пăхрăм. Улăхра ĕне çӳрет! Эп ăна тӳрех палласа илтĕм! Вăл яланхилле васкамасăр пыратчĕ, умĕнче тĕрлĕ тĕслĕ пĕлĕт — лĕпĕшпе йĕпвăрри — çаврăнатчĕ. Ку хутĕнче ĕнене чысласа унпа пĕрле çӳрекен ушкăна тепĕр чун хутшăннăччĕ — хыçалтан Ятсăрри чупса пыратчĕ. Çакна çывăхран курас тесе эп улăха чупса тухрăм. Анчах эп çитнĕ çĕре унта никам та пулмарĕ.

Каçхине эп Ятсăрри патне çул тытрăм. Вăл этем чĕлхине пĕлекен ĕнепе туслашрĕ пулсан пирĕн чĕлхене те вĕренчĕ пулĕ.

Çура хăйĕн юратнă вырăнĕнче — алкумĕн çӳлти картлашки çинче — ларатчĕ.

— Аван-и, Ятсăрри, — терĕм эпĕ, — кала-ха тархасшăн, паян кăнтăрла вун икĕ сехетре эс ăçта пултăн?

Çура мăйк! тесе çеç илчĕ, этемле пĕр сăмах та шарламарĕ. Ун пирки пăшăрханмалли çук-ха, вăл икĕ уйăхра кăна. Аса ил-ха тетĕп хама, икĕ уйăхра чух эсĕ мĕн тума пĕлеттĕн?

Ятсăрри вара халь вăштăрти çиле хăваласа çитсе иртсе кать. Пултарулласкер, вăл этемле калаçма та вĕренĕ.

Çав кун пĕрех ăнаçлă пулчĕ, хăш-пĕр япаласем палăра пуçларĕç. Ман пата Сантăр чупса каçрĕ. Эп ăна ним пулман пек, никамран та нимĕнле пулăшу та ыйтмасăр лăпкăн çеç каларăм та хутăм:

— Пĕлетĕн-и, Сантăр, эп паян ĕнене куртăм!

— Улăхпие-и?

«Эттеттей! Эппин ăна Улăхпи тесе чĕнеççĕ! — хĕпĕртерĕм эпĕ. — Мĕнле тӳрех ăнкараймарăм-ха? Ара, ялĕ Улăхкасси пулсан ку ĕне Улăхпи пулмалла çав!»

Эп çине тăрсах тĕпчес темерĕм, мĕншĕн тесен Сантăр ĕне çинчен калаçма юратмасть, пĕрремĕш хутĕнче вăл мана ун çинчен пĕр сăмах та каламарĕ вĕт. Пусахласа нимĕн те тутараймастăн ăна.

Анчах та хальхинче ача, шухăша кайнăскер, хăех калама пуçларĕ:

— Паян кукамай ман апая «эс пĕтнĕ çын» терĕ. Улăхпие эпир кукамайпа иксĕмĕр те куртăмăр, апая çакăн çинчен каларăмăр та вăл ахăлтатса кулса ячĕ: «Ун пек ĕне çук!» — терĕ. Пурри çинчен мĕнле «çук» темелле-ха? Кукамай: «Эх, Уçтине, мĕн калаçан эс, ăна санпа иксĕмĕр те миçе хутчен курман пуль эпир, аса ил-ха», — терĕ. Апай: «Эп ăна иртнĕ çул та курман, кăçал та курмастăп, вăл — шутласа кăларнă япала çеç!» — терĕ. Кукамай вара сехĕрленсех ӳкрĕ: «Ах, Уçтине, эс пĕтнĕ çын иккен!» — терĕ.

Ача шăпланчĕ, кайран куç харшине пĕркелентерсе илчĕ.

— Улăхпие курманни аван мар. Ку ырра пĕлтермест.

Чăнах, этем малтан курать, кайран пач курми пулать — мĕн ырри пултăр ĕнтĕ кунта?

Сантăр пăшăрхансах ӳкнĕччĕ.

— Апай куçне мĕнле уçмалла-ши? Мĕн те пулин тăвасах пулать.

Мĕн те пулин тумаллах пулĕ çав. Эпĕ те çапла шутлатăп.



# ХИСЕПЛӖРЕН ТЕ ХИСЕПЛӖ ҪЫН

Чӳречерен пӑхрӑм та Сантӑр курӑнса кайрӗ. Ман пата килет. Эп ӑна хирӗҫ тухнӑ чух вӑл алкум умӗнче кӗсйисене тавӑрса тӑратчӗ. Тӗлӗнтӗм кӑна мар, эпӗ хӑрасах ӳкрӗм — халиччен нихӑҫан та арҫын ача кӗсйи пушӑ пулнине курманччӗ.

— Сантӑр, мӗн те пулин пулман пуль — сан кӗсйӳсем пушах-ҫке? — тетӗп.

— Час тултаратӑп, ҫавӑнпа пушатрӑм, — терӗ ача юлашки кӗсйине силлесе. — Курмастӑр-им, пӑрҫа тултарма хатӗрленетӗп. Кайрӑмӑр-и?

Хӑ! Пӑрҫа? Умсӑр-сумсӑр калаҫасси Сантӑрӑн та пулкалать-ши? Халь тулса ҫитнӗ пӑрҫа ӑҫтан тупатӑн? Унӑн пуш хутаҫҫи те ҫук-ха. Вӑл хӑш хирте ӳснине питӗ лайӑх пӗлетӗп, ӗнер ҫеҫ унта Ятсӑррипе уҫӑлса ҫӳрерӗмӗр. Халӗ пӑрҫа ҫеҫкене ҫеҫ ларнӑ. Ученӑйсем пӑрҫа ҫеҫки ҫинчен ӑнлантарнӑ чух ӑна «парӑс», «икӗ кӗсмен» тата «кимӗ» ҫине пайлаҫҫӗ. Эпӗ ҫакна Ятсӑррине кӑтартсах парас терӗм, ҫавӑнпа икӗ шап-шурӑ ҫеҫкерен пулнӑ «кимме» хуллен, асӑрханса уҫрӑм та, ҫура тӗлӗннипе чӗвен тӑчӗ: ҫумӑр хыҫҫӑн «киммипе» «кӗсменне» ҫеҫ мар, «парӑсне» те шыв илнӗччӗ.

Сантӑр ӗҫлӗ канаш пара пуҫларӗ:

— Эсир кӗсьеллӗ тумтир тӑхӑнӑр, кирлӗ пулать.

Юрӗ, юрӗ, кайса пӑхар-ха, ӑҫтан пӑрҫа шыраса тупӑн эс? Ҫӗр тӗпӗнчен-и? Кӗсьеллӗ тумӗ тупӑнӗ-ха, ав ман пӗр курткӑн кӑкӑр ҫинче ҫеҫ мар, ҫурӑм хыҫӗнче те кӗсье пур. Улӑхкассине килме пуҫтарӑнсан шӑп килтен тухса каяс умӗн эп ал шӑллипе супӑнь чикменнине аса илтӗм, анчах ман хумалли вырӑн ҫукчӗ, ҫавӑнпа эп куртка ҫурӑмӗ ҫине вӑр-вар пысӑк кӑна кӗсье ҫӗлесе лартрӑм. Пӗлетӗр-и, питӗ меллӗ япала: алла та туртмасть тата пӳ-сие те кӑштах тӳрӗрех тӑвать, ман

пек тăрнаккай этемшĕн ку калама çук усаллă, атту эп ытлашши пĕкĕрĕлсе утатăп.

Уттартăмăр. Сантăр малта пырать, эп — ун хыçĕнче. Сĕлĕ ани енне пăрăнтăмăр. Ак Сантăр ман кĕсьене асăрхарĕ:

— Мĕн ку? Кĕсье-и?

— Паллах, — мăнаçлăн хуравларăм эпĕ.

— Мелсĕр япала.

— Мĕскер, мĕскер? Мелсĕр?.. — хам ăслайăма хӳтĕлеме пуçларăм, наука çынни пекех ăнлантаратăп: — Мĕнле мелсĕр? Пирĕн алăсем кĕлетке икĕ енĕпе вырнаçнă, вĕсемшĕн пур пĕрех — хăть кăкăр çинчи кĕсье, хăть çурăм çинчи кĕсье.

— Мелсĕр япала.

Тен, маншăн калама çук меллĕ, эп унпа ирччен тавлашма хатĕрччĕ те, калаçăва каяраха хăвармалла пулса тухрĕ, мĕншĕн тесен Сантăр çулран пăрăнчĕ те тăп-тăвăр суха кассипе сĕлĕ ани ăшне кĕрех кайрĕ. Эп çул çинчех тăратăп: ара, ăçта çул тытрĕ ку ача?

Сантăр тата шаларах кĕчĕ те шупка симĕс лаптăк патĕнче чарăнса тăчĕ. Сĕлĕ ани хушшинче çав лаптăк питĕ уçăмлăн курăнать, эп ăна тахçанах асăрханăччĕ-ха, унта урăх йышши сĕлĕ ӳсет пулĕ тенĕччĕ.

— Килĕр! Татма юрать! — кăчăк туртрĕ мана Сантăр.

Мĕн тупрĕ-ши, мĕн татма хатĕрленет-ши? Пăрçине пăрçа мар-ха та... кайса пăхас, ма каяс мар. Ак сана пăрçа! Туптулли хутаçĕсем çурăлса каяссăн курăнаççĕ.

— Татăр! — тет Сантăр (çак хир хуçи вăл тейĕн çав!), хăй вара татнипе кăна çырлахмасть, çиет те, ырлăха лекни ун пичĕ-куçĕнченех паллă.

— Вăрçмаççĕ-ши? — тетĕп эпĕ хăюсăррăн. — Ку ял хирĕ вĕт-ха, сан пахчу мар.

— Вăрçмаççĕ — кăна Юманов акнă! Вăл ятарласа çапла акса хăварать пирĕн валли, кил те тат! Вăл хăех: «Сирĕн валли кучченеç пултăр», — тет.

— Ялан çапла тăвать-и?

— Ялан пулмасӑр! Вӑл ахаль ҫын мар вӗт. Анчах тирпейлӗ татас пулать: сӗллине таптама юрамасть, пӑрҫа хӑмӑлне те амантма юрамасть. Ӑнлантӑр-и?

— Ара, мӗншӗн ку тӗлте пӑрҫа тулса та ҫитнӗ, леш хирте вара ҫеҫкене ҫеҫ ларнӑ-ха?

— Ӑнлантартӑм-ҫке: кӑна Юманов акнӑ, вӑл ахаль ҫын мар, ҫӗр ӗҫченӗ. Чи ӑшӑ хир суйласа илнӗ те маларах акнӑ. Эп Юманова хисеплетӗп.

«Ҫапла, эс кама хисеплемеллине пӗлетӗн», — шухӑшласа илтӗм эпӗ, анчах нимӗн те шарламарӑм. Тӗрӗссипе каласан, Юманова эпӗ те ӑна хӑйне куричченех хисеплеме пуҫларӑм. Мана ун кучченеҫӗ питӗ кӑмӑла кайрӗ, шутлӑр-ха тата — ҫавнашкал кучченеҫ парнелет, хӑй ун вырӑнне пӗртен-пӗр япала ҫеҫ ыйтать: тирпейлӗ татчӑр. Чӑн-чӑн ҫӗр ӗҫченӗ ҫав!

Эпир пӗтӗм кӗсьене тӑнк тултартӑмӑр. Манӑн ҫӗнӗ кӗсье те кирлӗ пулчӗ. Эпӗ унпа еплерех усӑ курнине Сантӑр сӑнасах тӑчӗ, унтан каллех касса татрӗ:

— Мелсӗр япала.

Хӑй тӗрӗс калать тесе шутласан ӑна урӑхла калаттараймастӑн. Эп кӑна тахҫанах пӗлсе ҫитнӗ, ҫавӑнпа тавлашас та темерӗм. Тен, вӑл тӗрӗсех шухӑшлать пулӗ. Эпӗ Юманов ҫинчен ыйта-ыйта пӗлтӗм. Сантӑр ӑна питӗ тӗплӗ сӑнласа пачӗ курӑнать, тепӗр кун ирхине улӑхра косилкӑпа ҫулнине курсан тракторӗ ҫинче ларса пыраканни Юманов пулнине тӳрех ӑнкарса илтӗм. Лутра та тӗреклӗ вӑл, пичӗ-куҫӗ хӗвелпе-ҫилпе хуралнӑ, пуҫне шурӑпа кӑвак тӑваткаллӑ карттус тӑхӑннӑ. Юманов курӑк ҫулатчӗ, унтан инҫе те мар Улӑхпи паккус хыҫҫӑн паккус выртса юлнине пӑхса тӑратчӗ.





## КАЛЛЕХ УЛӐХПИ ҪИНЧЕН

Ҫаплаччӗ ҫав: Юманов утӑ ҫулатчӗ, вӗл-вӗл вӗлкӗшекен лӗпӗш-йӗпвӑрри пӗлӗчӗ варринчи Улӑхпи вӑл ӗҫленине пӑхса тӑратчӗ. Тен, куракa ҫулни ӗнен кӑмӑлне каймарӗ пулӗ? Эпӗ ҫакӑн ҫинчен Сантӑртан ыйтса пӗлесшӗнччӗ: вӑл ку енчи этем-ҫке тата ҫирӗп хресчен пуласскер. Анчах вӑл Улӑхпи ҫинчен калаҫма сыхланать ҫав, пӗр-ик сӑмах калать те мӑшт пулать.

Паян мӗнлерех калаҫу ҫаврӑнса тухӗ-ха...

— Сантӑр, ӗнер Юманов утӑ ҫулатчӗ, эп ӑна тӳрех палласа илтӗм.

— Ӑна пурте тӳрех палласа илеҫҫӗ.

— Пӗлетӗн-и, Сантӑр, Улӑхпи вӑл мӗнле ҫулнине пӑхса тӑратчӗ.

Ача шăпланчĕ те айккинелле пăхать. Мĕнле каластарасши? Э-э, тавлаштарас ăна!

— Пĕлетĕн-и, Сантăр, ман шутпа, Улăхпи курăка çулса пăрахнине кăмăлламасть пулмалла.

— Ма кăмăлламасть? Çав тери кăмăллать! Мĕншĕн тесен вăл пире юрататъ. Вăл çынсем лайăх пурăннишĕн, выльăх-чĕрлĕхĕн утă нумай пулнишĕн савăнать.

— Вăл хăй улăхсăр мĕнле пурăнтăр-ха?

— Çĕр — ĕмĕрлĕх япала, унта çĕнĕ курăк çитĕнет.

Калаçма пуçларĕ тĕк, тен, вăл тахçантанпах ман пуçа çĕмĕрекен ыйтăва та татса парĕ?

— Сантăр, кала-ха, çак ялта Улăхпие курман çын пур-и?

Ун пичĕ-куçĕнченех тавçăрса илтĕм: çакна пĕлет вăл, анчах мана калама иккĕленет. Тавах — каларĕ çавах та:

— Пур ун пек çын — Микиш пичей.

— Ăçта пурăнать вăл?

— Леш енче, чӳречине çуман пӳртре.

— Улăхпие мĕншĕн халиччен те курман-ха вăл?

— Кам пĕлет? Ман кукамай çапла калать: «Ялан вăрçать-хирĕлет, çавăнпа курмасть», — тет. Микиш пичей хăй питĕ ĕçчен вăл, анчах ялан çĕр ĕçне ылханать, «мур çĕрĕ» тет. Çĕре вăрçма та, ылханма та юрамасть, ăна сивĕ сăмахпа та асăнмалла мар, мĕншĕн тесен унăн нимĕнле айăп та çук, вăл пире ырăлăх çеç парать. Мана кукаçи çапла каласа хăварчĕ.

Кун хыççăн эпĕ те шухăша кайрăм. Сантăр та пуç ватсах темĕн çинчен шухăшлать. Ача ассăн сывласа ячĕ те:

— Тата çакăн пек çынсем те пулаççĕ: унччен вĕсем Улăхпие курнă, кайран ăна курми пулнă, — терĕ.

Вăл амăшĕшĕн пăшăрханчĕ ĕнтĕ. Анчах урăх калаçасшăн пулмарĕ, килне васкарĕ.





## ЙЁТЁН ӐКРЁ

Эпĕ акă мĕскер ăнлантăм: хулара пурăннă чух пирĕн пата аслатин ахрăмĕ çеç çиткелет, аслатийĕ хăй ялта пурăнать. Çак каç вăл ман килех вырнаçрĕ пулмалла. Ăçта тетĕр-и? Мачча çине. Аслати авăтнă чух пĕтĕм пӳрт кисренсе тăчĕ. Çавах та эп кравать айне пытанмарăм-ха, пысăк тутăр пĕркенсе вырăн çинче лартăм, пуринчен ытла кăмакашăн сехĕрлентĕм — вăл ишĕлсе ансан мĕн тумалла-ха? Кăмакасăр юлсан кил те кил мар вара. Çиçĕм çиçме пуçласан чӳречесем темле шурă вут-çулăм хыпса илнĕ пек ялтраса тăраççĕ, кăнтăрла курăнман япаласем курăна-курăна каяççĕ. Эпĕ акă мĕн асăрхарăм: кăмака çинче чип-чипер саплана икĕ мăшăр кăçатă çакăнса тăрать, сак айĕнче вара... симĕс пархăт сăхман тăхăннă, аллине вут хĕç тытнă гном тăра парать! Гномсем çурçĕрти çĕршывсенче пурăнаканччĕ, халĕ вара Улăхкассине те çитрĕç-шим? Вĕсем унччен нихă-

çан та хĕçпе çӳреместчĕç-çке, гном та хĕç тытрĕ пулсан — пĕтрĕмĕр... Эп тата вĕсемпе мĕнле калаçмаллине те пĕлместĕп. Çиçĕм тепре çатăртатса çиçсе илчĕ те пӳрт ăш-чикки тата уçăмлăрах курăнчĕ: гном мар, çумне йĕп тăрăнтарнă симĕс пушкар иккен ку!

Çĕрĕпе аслати авăтрĕ. Вăл кĕмсĕртетмен хушăра çумăр кашлани тата таçтан хăйпăнакан хăма шалт та шалт туни илтĕнсе тăчĕ.

Ирхине тавралăх тĕлĕнмелле канлĕччĕ. Анчах ăçта пăхнă унта хуçăлса аннă туратпа татăлса ӳкнĕ çулçă сапаланса выртатчĕ. Хирте мĕнле-ши? Эпĕ резина атă тăхăнса ятăм та хирелле васкарăм. Ав епле! Çӳллĕ курăка пăтратса-чăлхантарса пĕтернĕ, лутра курăка çĕр çумне лапчăтнă. Сĕлĕпе пăрçа чиперех лараççĕ-ха, пĕр еннелле тайăлнă — çакă çеç. Çул леш енче, кунтан инçех те мар, йĕтĕн ӳсет. Ун çийĕ яланах тип-тикĕс ешĕл пурçăн пек курăнатчĕ, анчах паян унта темскерле шăтăк-путăк пур пек туйăнать. Çитрĕм те çав вырăна тӳрех хама хам ӳпкелеме пуçларăм: «Эй, тăванăм, ку каç сана мар, акă кама чăннипе те хăрушă пулнă, эсĕ ăшă та типĕ килте, çемçе вырăн çинче лартăн, кунта вара...» Йĕтĕн шалкăм çумăра тӳсеймен иккен, кĕрешсен-кĕрешсен (паллах, кĕрешнĕ ĕнтĕ вăл!) тылланса ӳкнĕ. Пĕтĕм уйĕпе мар, тĕллĕн-тĕллĕн, анчах кун евĕрлĕ пĕчĕк лаптăк та чуна ыраттарать. Хĕвелĕ те пăхать, тăрисем те юрла-юрла таса тӳпене вĕçсе хăпараççĕ, йĕпе курăк силленет, типет, йĕтĕн вара, халтан кайнăскер, пуçне çĕклеймесĕр мĕскĕннĕн выртать.

Çакăн хыççăн эп ку вырăна кашни кун киле-киле каяттăм. Пĕр кунĕнче вара савăнсах ӳкрĕм: ара, йĕтĕн тăма хăтланать! Мĕнле тетĕр-и? Пирĕн пекех, çынсем евĕрлех. Чирлĕ çын сывви çине тĕршĕнсе тăнă пек, халсăр туна тĕрекли çине таянать, хуллен, темле хĕн пулин те, пĕрех пуçне çĕклет, шăм-шаккине те çĕклет, каярах вара хăй те теприне, кӳршине, пулăшма пуçлать. Йывăр ĕç ку, вĕсем мĕнле тапаланнине

сăнанă май, ăшăмра вĕсене вăй парса тăнă май хамăн çамка та тарласа каятчĕ.

Вăхăт шунăçемĕн шупка симĕс хир сарă симĕс курăна пуç-ларĕ — йĕтĕн пуçĕ ӳссе-саралса пычĕ. Тĕлĕнмелле, халлĕхе тăрайман туна çинчи йĕтĕн пуçĕсем те пурнăçран юлмарĕç, вĕсем те майĕпен саралчĕç. Пĕр каçхине, хĕвел шевлисем юнашар ялти чиркӳ тăррине çиçтерсе тăнă чух, эпĕ акă мĕскер асăрхарăм: йĕтĕн пуçĕ чиркĕвĕн çавра тăррине аса илтерет. Паллах, чиркӳ тăррипе танлаштарсан вăл пĕчĕк çеç, мĕнле калас, пĕчĕкçĕ чиркӳ тăрри...

Пĕррехинче йĕтĕн хирĕ патĕнче эп Юманова — ырă çĕр ĕçченне — тĕл пултăм. Эпир пĕр-пĕрне сывлăх сунтăмăр.

— Мĕнле асапланать... — терĕ вăл çĕрте выртакан йĕтĕн пирки. — Ку тăрĕ-ха, пĕтĕм хирĕ тăлланса ӳкнĕ пулсан шар кураттăмăр. Выртнă тырра тăрatакан машина шутласа кăлармалла.

Ăслă шухăш... Кирлĕ шухăш... Кайран вăл ман пуçран тухма пĕлмерĕ: юмах куçарса ларатăп, хам вара вĕççĕр çав тĕлĕнтермĕш машина çинчен шухăшлатăп. Эп ăна тĕлĕкре те куртăм. Мĕнле ăнлантарса парас-ши: çавăн пек маши-на... çăмăлскер, çунатлăскер, Улăхпи умĕнче вĕçсе пыракан йĕпвăрри евĕрлĕ. Питĕ аялтан, çĕр çумĕнченех, вĕçет, вĕçнĕ май вăйлă варкăш кăларса пырать, çавă вара ӳкнĕ хăмăла çĕклет, тăратсах лартать. Чăнах, ăслă-тăнлă, паха машина. Илемлĕ тата — сенкер çунатлă.

Хамăн тĕлĕке Сантăра каласа парас-ха. Тен, вăл ман шухăша малалла аталантарĕ, кирлĕ маррине кăларса пă-рахĕ, кирлине аванлатĕ, халех мар пулсан каярах та пулин ăсласа кăларĕ çавăн пек машина.





## ХĂМЛА ÇЫРЛИ ТАТАТПĂР

Мĕнле ăнăçлă кун пулчĕ паян! Пуçланасса та вăл питĕ ыррăн пуçланчĕ. Мана чиперкке терĕç. Кам каларĕ-и? Сантăр каларĕ. Эп сĕт илме кайма тухнăччĕ. Кулюк аппасем умĕнчен иртсе пыраттăм. Сантăрпа Ятсăрри алкум картлашки çинче выляса ларатчĕç. Эп чарăнса тăтăм. Калаçăва Сантăр пуçларĕ:

— Эсир ĕмекен пăру пекех, ялан сĕтшĕн хыпкаланатăр.

— Самăрланас тетĕп-ха, Маттюк аппа пек пулас килет.

Сантăр шартах сикрĕ.

— Уй, мĕн калаçатăр? Ун пек самăр пулсан ура ыратма пуçлать. Эсир вара епле тăрнаккай, шăп та шай хăмла шалчи пек. Вăрăм шалча çинче хăмла та шеп пулать.

Эп кӳренмеллипех кӳрентĕм.

— Эс мана хăвăн пахчуна кăларса тăратасшăн мар пулĕçке? Ман тавра хăмла явалантăр тетĕн-им?

Халь ĕнтĕ Сантăр кӳренчĕ.

— Эп, мĕскер, ухмах-им, эсир этем пулнине, хăмла шалчи вырăнне тăма килĕшмессе пĕлместĕп-им? Хăмла шалчи пек хĕрарăм питĕ чиперкке вăл, калама çук чиперкке!

Кӳренни-туни самантрах таçта кайса кĕчĕ. Эпĕ вара, калама çук чиперккескер, сĕт илме уттартăм.

Маттюк аппа яланхилле:

— Сана мĕнле сĕт парас — ирхинехине-и, каçхинехине-и? — тенĕ хыççăн çапла ыйтрĕ: — Хĕрĕм, эс васкатăн-и?

— Çук, васкамастăп.

— Эс вăрмана çӳреме юрататăн вĕт, паян пĕрле каяр мар-и, э? Эп хуçапа кайнă пулăттăм та, ăна хăваласа çитме çук: этем майĕпе çӳреме пĕлмест, таçтаваскать, таçта васкать. Санпа иксĕмĕр хăмла çырли татăттăмăр, э?

Эп тĕлĕнсе тăтăм: ара, вĕсен пахчи тулли хăмла çырли, никамăн та ун чухлĕ çук. Эп мĕншĕн тĕлĕннине Маттюк аппа ăнкарчĕ курăнать, вăл йăл кулса илчĕ те:

— Хăмла çырлийĕ пахча туллиех-ха вăл. Ман вăрмантине курас килет: кăçал мĕнлерех-ши? — терĕ.

Тепĕр çур сехетрен эпир вăрманалла çул тытрăмăр.

Сысна курăкĕ хуплана сукмакăн варри çеç такăр, икĕ айккипе лутра та йышлă туратлă, нумай чечеклĕ салтак тӳми ӳсет. Унăн тĕмĕсем-ĕречĕсем чӳхенсе выртакан симĕс-сарă-шурă хăю пек курăнаççĕ. Çак хăю хыçĕнче урпа хирĕ сарăлса выртать. Маттюк аппа чарăнса тăчĕ. Эпĕ те чарăнтăм.

— Пиçет, — терĕ Маттюк аппа, — пиçнĕ çăкăр шăрши кĕрет!

Мана вара ăшă икерчĕ шăрши кĕнĕ пекех туйăнса кайрĕ — ырлăх!

Малалла утатпăр. Пирĕн çума икĕ пăрчăкан хушăнчĕ. Вĕсем малта сиккелесе пыраççĕ, çул кăтартаççĕ. Пире вăрман хĕррине çитерсе хăварчĕç те кайран пач куçран çухалчĕç.

Вăрманĕ йăвă, анчах та хурăнĕ йышлă пулнăран вăл çап-çутă пек курăнать. Шăрчăк чăрăлтатать, кайăк юрлать, эпир чĕвĕлти те чăнкăлти, чĕв-чĕв те чăнк-чăнк туса тăракан тĕнчере, пуçа ыррăн-ыррăн çавăрса яракан шăршă сапалакан тупăлха хушшипе утатпăр. Кĕçех пысăк уçланкăна сиксе тухрăмăр.

— Çитрĕмĕр, çакăнта татăпăр, — терĕ Маттюк аппа.

— Çакăнта — улăхра-и? Ара, кунта курăк çеç-çке?

Хăмла çырли тесен эп çӳллĕ, хам çӳллĕш тĕмсене аса илетĕп. Туратсене çĕклетĕн те — унта ярăм-ярăм таса та шултăра çырла. Çут çанталăк çут çанталăках çав вăл, ун пĕр япалиех тĕрлĕрен пулать. Ак кунти хăмла çырли тĕмĕсем



лутра кăна, улăх курăкĕ ăшĕнчен курăнмаççĕ те, анчах кăшт çĕкле-ха вĕсен тураттисене — унта ярăм-ярăм таса та шултăра çырла. Уçланкăна хăмла çырли шăрши саралнă, пиртен те çырла шăрши кĕрет.

— Маттюк аппа, ку курăка çулаççĕ-и?

— Çулмасăр, сĕтеклĕ, пыл шăршиллĕ курăк — мĕнлерех утă пулать!

— Хăмла çырли тĕмĕсене касса пăрахмĕç-ши, вĕсем курăк хушшинче курăнмаççĕ те вĕт! — пăшăрханатăп эпĕ.

— Тирпейлĕ-тимлĕ çын касмасть, тепри касать те пăрахать, уншăн нимĕн те мар.

— Кăна камăн çулмалла?

— Манăн хуçа çулмалла, Юманов çулать.

— Апла пулсан чиперех! — тетĕп те лăштах пулатăп.

Пыл хурчĕсем нăйлатаççĕ. Куккук авăтать. Эпир шăкăлтататпăр.

Маттюк аппа калаçнă хушăрах шăпăрт пулчĕ. Вăл таçталла тинкерсе пăхать. Эпĕ те çавăнталла пуçа пăртăм та курăк хушшипе пыракан çăлтăр хушкаллă ĕнене асăрхарăм. Ерипен утать вăл, ун умĕнчен йăлтăр-йăлтăр пĕлĕт вĕçсе пырать. Ăна курма пĕтĕм чечек чĕвен тăчĕ пулас, çырлине пула авăнса аннă туратсем те çĕкленчĕç — эп нихăçан та çавăн пек хӳхĕм улăх курманччĕ. Çаран хумлăн-хумлăн авăнать, ĕне умĕнче пуç таять пулмалла. Эп Маттюк аппаран нимĕн те ыйтмарăм: Улăхкасси çыннисем Улăхпи çинчен

каласмассĕ, темле вăрттăнлăх упрассĕ пулинех. Юрать-ха, Сантăр пур, вăл хăш чухне пĕр-ик сăмах калать, кăштах ăнлантарса та парать.

— Пăхса çаврăнать... — хăй тĕллĕн каласса илчĕ Маттюк аппа.

Улăхпи уçланкă урлă каçса хурăнсем хушшине кĕрсе кайрĕ.

Эп ĕнтĕ шăп çеç тăратăп — тем каламалла кун пек чухне.

— Хĕрĕм, атя ларса канатпăр, — терĕ Маттюк аппа.

Эпир хăмла çырли тĕмĕпе сар çип ути хушшине вырнаçрăмăр. Маттюк аппа хăй пуракĕнчен шурă пирпе чĕркенĕ хура çăкăр чĕллисем кăларса хучĕ. Пĕр чĕллине мана тăсса пачĕ:

— Тыт, хĕрĕм, паян пĕçертĕм. Хăмла çырлипе çиер-ха.

Шутлăр-ха: эп пыл шăрши саракан курăк хушшинче ларатăп, ăшă, пуç тĕлĕнче — янкăр тӳпе, хурăнлăхра кук-кук авăтать. Эпĕ çемçе çăкăрпа хăмла çырли çиетĕп. Тутлă. Калама çук тутлă.

— Хĕрĕм, сана пирĕн ял кăмăла каять-и? — ыйтать Маттюк аппа.

«Кăмăла каять» тени çеç ытла сахал вăл, эп пуçпа та султăм, кулса та илтĕм.

— Хĕрĕм, пĕлетĕн-и, пирĕн яла пĕтмелли ял тесе шутлатчĕç, мĕне кирлĕ çав ял, темиçе кил çеç, аслă çултан аякра ларать, ăна урăх çĕре куçармалла тетчĕç, — терĕ Маттюк аппа.

Çакна илтсен маншăн тĕнче пĕтнĕ пекех туйăнса кайрĕ. Шĕпĕлтетсе ларакан вăрманта, пĕр канмасăр авăтакан кук-кук çывăхĕнче, çăварта ыраш çăкăрĕпе хăмла çырли тути туйăнса тăнă чух çак сăмахсем питĕ тискеррĕн илтĕнчĕç.

Маттюк аппа пĕр хушă шухăша кайса ларчĕ, унтан сăмахне малалла тăсрĕ:

— Этем вăл ăслă, анчах хăш чухне хăрушă йăнăш туса хурать. Çавăнпа пысăк ĕç тунă чухне пĕрле шухăшламалла, кашни-кашни çынтан ыйтмалла: ăна мĕн кирлĕ, вăл мĕнле,



ăçта пурăнасшăн — этем пурнăçне çавăн чухне çеç лайăхлатма пулать.

Ватă хресчен хĕрарăмĕ тĕрĕс калать, эпĕ те çапла шутлатăп.

— Эпир пĕрех хамăр яла хӳтĕлесе хăвартăмăр — пирĕн çыннисем çапла çирĕп: ман хуçа та, Юманов та. Танюк пичей — Сантăр кукашшĕ — ялти чи çирĕп хресчен шутланнă. Эпир çĕр çумне çыпăçса ларнă та, пире хăпăт-ха унтан! Тата... — Маттюк аппа ман çине тимлĕн пăхса илчĕ те тĕлĕнмелле сăмах хушса хучĕ, — тата пирĕн ырă сыхлавçă пур.

Эпĕ нимĕн те ыйтмарăм, çавах ăнкартăм кăштах.

Эпир тата çур сехет пек лартăмăр та кайран пураксене тӳпеми çырла тултарса киле таврăнтăмăр.

Пĕтмелли ял тесе шутлатчĕç текен сăмахран манăн тата тепĕр хут сехĕрленсе ӳкмелле пулчĕ...

Эпĕ каçпа урама уçăлса çӳреме тухнăччĕ. Хĕвелĕ те анманччĕ-ха, тата уйăхĕ те тухнăччĕ. Уйăхĕ çутатмастчĕ — хĕвел анасса кĕтетчĕ. Хĕвел вара, паянхи кунпа чаплăн сывпуллашас тенĕ пекех, пĕтĕм яла çутатнăччĕ. Ун ырă çутинче кашни кил çĕнĕ евĕр, асамлăн курăнса тăратчĕ. Ара, ял пĕтнĕ пулсан çак хĕвел мĕне çутататчĕ-ха? Пушă вырăна-и? Çурт-хуралт ишĕлчĕкне-и? Ун пек пулнă пулсан аслă хĕвел те тăлăх ача пек мĕскĕн пулатчĕ мар-и?..



## САНТĂР ХАЛЕХ ТӐРЛЕТТЕРЕСШĔН

Эпĕ кунта уçăлса çӳреме те сĕт ĕçме çеç килмен. Эпĕ те ĕçлемесĕр çăкăр çиместĕп. Ман пĕр юмах куçармалла. Юмахĕ мĕн çинчен-и? Вĕçсе кайнă кӳлĕ çинчен. Çапла тума сăлтавĕ пулнă унăн. Пăтăрмахĕ пĕр старике пула сиксе тухнă. Вăл хир енче пурăнакан пĕлĕшĕ патне хăнана кайнă. Хир енче вăрман та, кӳлĕ те çук. Старик хăнара ларнă-ларнă та мухтанма пуçланă: «Пирĕн вăрман та пур, пирĕн кӳлĕ те пур. Вăрманĕ пуян, кӳлли тарăн...» Юлашкинчен старик хăй пĕлĕшне канаш парать: «Мĕн асапланса пурăнатăр кунта, тытăр та урăх çĕре, вăрманлă-кӳлĕллĕ вырăна, куçса кайăр!» Пĕлĕшĕ килĕшмест: «Асаттесен çĕрне пăрахса хăвармастпăр!»

Старик килне таврӑнать, тӳрех кӳлӗ хӗррине пулӑ тытма тухса ларать, хӑй ӑшӗнче хир енсенчен тӑрӑхла-тӑрӑхла илет. Тепӗр кунне тӑрать те — вӑрман та, кӳлӗ те ҫук. Кӳлӗ вӑрманӗ-мӗнӗпех вӗҫсе кайнӑ! Кайран пӗтӗм халӑх кӳлле шырать. Тупаҫҫӗ — хир енче, шӑпах старик пӗлӗшӗ пурӑнакан ял ҫумӗнче. Халӑх йӗрет, кӳлле каялла вӗҫсе килме ӳкӗтлет. Анчах кӳлли паян кунччченех ҫав ҫӗнӗ вырӑнта.

Ҫак юмаха куҫарса пӗтерсен Сантӑра чӗнсе илтӗм — вуласа парам-ха: вӑл ӑслӑ-пуҫлӑ ача, хаклатӑр. Сантӑр итлеме те пӗлет иккен: хӑлхине чӑнк тӑратрӗ, хӑш-пӗр ҫӗрте кула-кула илчӗ, пӗр тӗлте куҫ харшине хаяррӑн пӗтӗрсе лартрӗ, тепӗр тӗлте пуҫне пӑркаласа эт-тет-тей! тесех илчӗ. Юмах вӗҫӗ вара ӑна пачах та килӗшмерӗ. Вӑл ман пата таплаттарса пычӗ те:

— Кӑна тӳрлетес пулать! Халех. Кӳлӗ унччченхи вырӑна таврӑнтӑр, — терӗ.

— Ара, манран килмест ку, эп ӑна мӗнле улӑштарам-ха?

— Улӑштарӑр. Унта мӗн тенӗ: халӑх кулянать, халиччченех хӑйсен кӳллине кӗтет тенӗ. Кӳлле каялла вӗҫтерӗр.

Ку ачаран мӗнле те пулин хӑтӑлас тесе килӗшнӗ пек турӑм:

— Юрӗ, шухӑшласа пӑхӑп. Тен, май тупӑнӗ, — терӗм.

Ахалех ҫапла каларӑм. Ҫакӑн хыҫҫӑн эп шухӑша кайнине курсанах Сантӑр хӗпӗртесе ӳкетчӗ: «Эсир кӳлле каялла тавӑрасси ҫинчен шухӑшлатӑр-и?» Чылайрах чухне эп ҫапла хуравлаттӑм: «Эп халь нимӗн ҫинчен те шухӑшламастӑп» е «Эп урӑххи ҫинчен шухӑшлатӑп-ха». Сантӑр вара тӳрех ӳпкелешме пуҫлатчӗ: «Эсир ун пек ҫын иккен! Чи кирлӗ ҫинчен шухӑшлас вырӑнне ӑпӑр-тапӑр ҫинчен шухӑшлатӑр!»

Пытармасӑр каласан эп ҫав кӳлле мӗнле каялла тавӑрмаллине пӗлместӗп. Халӑхӗ кӗтет пулӗ те-ха, анчах ӑна мӗнле пулӑшмаллине ӑнкараймастӑп.





## АСА ИЛЧЁ

Кулюк аппа манран тăтăшах хула çинчен ыйта-ыйта пĕлетчĕ. Пуринчен ытла ăна хула шкулĕсем шухăшлаттаратчĕç: унти учительсем мĕнлерех пек, лайăх вĕрентеççĕ-и ачасене тетчĕ. Кинемей мĕншĕн пăшăрханнине эпĕ питĕ лайăх ăнланатăп: кăçал Сантăрăн пĕрремĕш класа каймалла, ашшĕ-амăшĕ ăна часах хулана илсе каять.

— Хулари шкулсем питĕ лайăх! — теттĕмччĕ те, Кулюк аппа манпа килĕшсе пуçне сулса тăратчĕ:

— Апла юрĕ, юрĕ...

Унтан каллех шухăша каятчĕ, çĕнĕ ыйту паратчĕ:

— Хĕрĕм, эс мĕнле шутлатăн, Сантăр хулана кайсан хăш-пĕр япаласене курми пулмĕ-ши?

— Çук, ун пек пулмасть. Ăна ун пек тăваймастăн.

Кинемей вара лăш сывласа яратчĕ:

— Сантăршăн хăрамастăп-ха! Каснă лартнă кукашшĕ вĕт!

Çавах та темскер канăç памастчĕ çав ăна.

— Пĕлетĕн-и, хĕрĕм, Уçтине те лайăхчĕ, ăшă кăмăллăччĕ, çивĕч куçлăччĕ, халь ав хăй ятне те килĕштермест. Урăхла ят памалла пулнă имĕш. Уçтине ма начар вара? Ун пек ятпа мухтанма та юрать, ăна асламăшĕ ячĕпе чĕнетпĕр, асламăшĕ вара, турра шĕкĕр, хитрине те хитре пулнă, ал ĕç тĕлĕшĕнчен те чи ăсти пулнă... — Малаллине Кулюк аппа пăшăлтатса пĕлтерчĕ: — Çынна ан кала та, унтан та хăрушăрах — пирĕн Уçтине чи кирлине курми пулнă...

Вăл мĕн çинчен систернине пĕлетĕп ĕнтĕ — хĕрĕ Улăхпие курмасть вĕт.

Сантăр амăшне эпĕ темиçе хут та тĕл пулнă. Питĕ илемлĕ вăл, хитре асламăшне хунă пулĕ çав.

...Пĕррехинче Уçтинепе тĕлĕнмелле ĕç пулса иртрĕ.

Çав кун вăл пĕчченех хура çырла татма кайнă. Темиçе сехет иртет, Уçтине çук. Амăшĕ пăшăрханма пуçлать: «Çухалса каймарĕ-ши, шурлăх тĕлне лекмерĕ-ши?..» Вăхăт каç енне сулăнать, Уçтине таврăнмасть те таврăнмасть. Пĕтĕм ял Кулюк аппа килĕ умне пуçтаранчĕ. Шырама каяс терĕç. Темиçен кайрĕç, эпĕ те вĕсенчен юлмарăм.

Васкатпăр. Ыттисем мĕн шухăшланине пĕлместĕп те — ман пуçа вара вăрманта аташнă çынсем çинчен илтни пыра-пыра кĕрет. Чăнах, Уçтине шурлăха пырса тăрăнчĕ пулсан... Çук, кун çинчен шухăшлама та хăрушă.

Каç пулчĕ. Тĕттĕмленет.

Ак вăрмантан пĕр çын тухрĕ. Хĕрарăм. Пире курчĕ те кунталла чупать. Уçтине! Эпир те ăна хирĕç чупатпăр.

Уçтине пире ытала-ытала, макăра-макăра каласа пачĕ:

— Çырла нумай тĕле пултăм. Тататăп та тататăп. Хам ăçта çитсе тухнине те асăрхаман. Пăхатăп та — таврара мăклăх, шурлăх. Çул çине тухас тетĕп — хам каллех унччен-хи вырăна çаврăнса тухатăп. Имшеркке кăна хурăнсем лараççĕ. Имшеркке те çинçешке хурăн ӳсет пулсан шурлăх-putлăх ĕнтĕ кунта тетĕп. Шыв пăчăртатса тухать, чарăнса тăрсан аялалла туртать. Эпĕ сехĕрленсе йĕрсе ятăм. Сасартăк пĕр сасă илтĕнсе кайрĕ (тăванран та тăван сасă!): «Кунта кам макăрать?» — тет. — «Эпĕ, — тетĕп, — Уçтине», — тетĕп. Пăхатăп та — Улăхпи тăра парать! «Уçтине, ман хыç-ран ут!» — тет. Пĕтĕм хăрани иртсе кайрĕ. Вăл мана аслă çул çинех илсе тухрĕ. Пĕлетĕр-и, пĕрремĕш хут эпĕ ăна шăп çав çул çинче курнăччĕ. Ун чухне эпĕ пиллĕкреччĕ.

Уçтине пичĕ тăрăх шăрçа пек куççуль шăпăртатрĕ. Хăй сăмахне вĕçне çитерет те вăл çĕнĕрен аса илме пуçлать: «Уçтине, ман хыçран ут», — тет...





## ЭПӖ ТЕ АСА ИЛТӖМ

Хӑш чухне пурнӑҫра пулниех тӗлӗкре уҫӑмлӑн та тӗп-тӗрӗс курӑнать. Ҫав касҫхине мана чӑнни, хам ача чухне курни, тӗлленчӗ. Пирӗн ӗне пурччӗ — Жданка. Эп тӗлӗкре ҫавна курнӑ…

…Анне Жданкӑпа пахча сухалать. Йывӑр пулнипе ӗне чарӑна-чарӑна тӑрать. «Тӑванӑм, ан чарӑн-ха, ан чарӑн, кайран хӑвна вырӑнтан тапранма хӗн пулать», — ӑс парать ӑна ман анне. Чӑнах, вырӑнтан хускалнӑ чух Жданкӑн урисем тӑр-тӑр чӗтреҫҫӗ. Мана, ачана, ялан пӗр япала хӑратать: ҫакӑн пек йывӑр ӗҫе кӳлӗнсех Жданкӑн ҫӑлтӑр хушки, шап-шурӑ пулмалласкер, тарланипе пуль, тӗттӗмленсе хуралса пырать. Эпӗ пӗлсе ҫитнӗ ӗнтӗ — ҫӑлтӑрӗ хуралчӗ пулсан вӑл тӑрӑнса анасла халтан кайнӑ…

…Шартлама хӗл кунӗнче анне ӗнепе вут турттарса килет. Ку хутӗнче Жданкӑн ҫӑлтӑрӗ хура марччӗ, чӗлтӗр пӑрпа витӗннӗччӗ…

…Кайран Жданка чирлесе ӳкрӗ. Вӑрҫӑ вӗҫленнӗ кун вилчӗ вӑл. Эп витене чупса кӗтӗм те ун умне чӗркуҫленсе лартӑм: «Ан вил, Жданка, ан вил! Вӑрҫӑ пӗтрӗ, эпир ҫӗнтертӗмӗр, малашне пахча та сухаламӑн, вут та турттармӑн», — йӑпатрӑм ӑна сивӗ тарпа хуп-хура пулса кайнӑ хушкинчен ачашласа.

Ир ҫинче курнӑ эп ҫак тӗлӗке. Вӑрантӑм та тӗлӗнсе кайрӑм. Ача чухне ман яланах Жданка унччен, йывӑр ӗҫе кӳлӗниччен, мӗнлерех пулнине курас килетчӗ — эп ӑна ун пек пӗрре те курман-ҫке-ха! Халь ӑнкарса илтӗм — вӑл шӑп та шай Улӑхпи пек пулнӑ! Тап-таса куҫлӑ, пӗтӗм таврана ырлӑх саракан, тӑнӑҫлӑха хӳтӗлекен, ҫынсене пулӑшакан-ҫӑлакан чун пулнӑ вӑл!..



## ВĂХĂТЛĂХА ÇЕÇ СЫВПУЛЛАШАТĂП

Киле кайма та вăхăт. Шăрăх иртсе кайнипе мар (кун çинчен эп радио тăрăх пĕлтĕм), часрах Çамрăк Юмахçăпа тĕл пулас та ăна Сантăр шухăшне — кӳлле каялла таварасси çинчен — пĕлтерес. Çамрăк Юмахçă пулăшасса шансах тăратăп.

Мана ку çуртра пурăнма калама çук аванччĕ. Унта пĕр ытлашши япала та çукчĕ, анчах этеме пурăнма-ĕçлеме мĕн кирлĕ, çавă пĕтĕмпе алă айĕнчеччĕ.

Мана çес мар, пĕтĕм чĕр чуна килĕшетчĕ вăл. Такам кантăка чакăртаттарать, пăхатăн та — кĕленче витĕр сана икĕ çавра куç мăчлаттармасăр пăхса тăрать! Кушак! Картишне тухатăн — унта сана пĕтĕм ял йытти кĕтсе ларать. Сĕтел хушшине кĕрсе ларатăн, çырнă-вуланă хушăрах чӳрече хашакĕн куçа та курăнман хушăкĕнчен пĕр лĕпĕш хĕсĕнсе кĕнине куратăн, кайран вăл пӳлĕмре вĕçсе çӳрет-çӳрет те çав хушăкранах каялла тухса вĕçет.

Тата пӳрт мăрйине чана йăва çавăрнăччĕ. Пĕр сулхăн кун кăмака хутса ятăм та — тĕтĕмĕ каялла пӳрте палкаса тухрĕ. Чанана вара урăх çĕре куçармалла пулчĕ. Çывăхри улăха çулса пуçтарса кĕнĕ хыççăн унта унччен çӳллĕ курăк

хупласа тӑнӑ темиҫе сукмак тухрӗ. Халӗ ҫавӑнти пӗр сукмакпа манӑн кил патне кашни ир пӗр мулкач сиксе килет. Килет те картлашка умӗнче ларсан-ларсан каялла вӗҫтерет.

Тухса каяс умӗн ҫак киле пӗр-пӗр парне парса хӑварасчӗ. Шутларӑм-шутларӑм та кантӑк хашакисене сӑрласа хӑварас терӗм. Кантӑкӗсене ҫуса тасатни, хашакисене ҫӗнӗрен сӑрлани ҫуртшӑн питӗ кӑмӑллӑ пулмалла!

Сӑрӑпа мелке тупса сӑрлама ҫеҫ пуҫланӑччӗ эпӗ, Сантӑр вӗҫтерсе ҫитрӗ. Кунти ӗҫ тус-юлташа та ҫитет — пилӗк кантӑк!

— Сантӑр, сӑрла! Мӗнле сӑрлас тетӗн, ҫапла ту!

Тӗлӗннипе-хӗпӗртенипе Сантӑр ахлатсах ячӗ.

Кантӑк хашакине сӑрласси — хаваслӑ ӗҫ. Хӗрсе ӗҫлетпӗр.

Ак хатӗр те! Ҫӗре анса темиҫе утӑм каялла чакса хамӑр ӗҫе ытараймасӑр пӑхса тӑраттӑмӑр, ҫурӑм хыҫӗнче сасӑ (тӑван та ырӑ сасӑ!) илтӗнсе кайрӗ:

— Илемлӗ. Чечеке ларнӑ улӑх пек.

Улӑхпи килчӗ-ҫке! Хальхинче эпӗ ӑна ҫывӑхранах куртӑм. Мана пуринчен ытла ун куҫӗсем тӗлӗнтерчӗҫ: тап-таса куҫсем... Пурне те ӑнланакан, пурне те куракан куҫсем... Жданка куҫӗсемех...

Сывпуллашмалли вӑхӑт та ҫитрӗ.

— Ева аппа, тата хӑҫан килетӗн, часрах кил! — терӗ Сантӑр.

— Килетӗп, часах килетӗп.

— Ҫамрӑк Юмахҫӑна салам кала, — терӗ Улӑхпи.

— Калатӑп.

Ҫав кунах эпӗ хулана тухса килтӗм...





## ТУПМАЛЛИ


Халех каятăп! . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Çитрĕм те! . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 4
Кĕтсе илекен пулсан аван çав! . . . . . . . . . . . —
Паллашатăп . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5
Малалла паллашатăп . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Ятсăрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
Пуç ăнкарайми ĕç . . . . . . . . . . . . . . . . . 11
Тĕреклĕ хуçа ӳсет! . . . . . . . . . . . . . . . . 12
Хĕвелпе çумăр хушшинче . . . . . . . . . . . . . 15
Ят хутăмăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
Улăхпи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
Хисеплĕрен те хисеплĕ çын . . . . . . . . . . . 21
Каллех Улăхпи çинчен . . . . . . . . . . . . . . 24
Йĕтĕн ӳкрĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
Хăмла çырли тататпăр . . . . . . . . . . . . . . 29
Сантăр халех тӳрлеттересшĕн . . . . . . . . . . 34
Аса илчĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 36
Эпĕ те аса илтĕм . . . . . . . . . . . . . . . . 38
Вăхăтлăха çеç сывпуллашатăп . . . . . . . . . . 39




Литературно-художественное издание

*Для младшего школьного возраста*

**Ева Николаевна Лисина**

**УЛĂХПИ**

**УЛЫХБИ**

*Повесть*

На чувашском языке

Редактор *А. К. Шашкина*. Художник *Н. Н. Тихонова*. Художественный редактор *А. В. Семенова*. Технический редактор *Л. К. Егорова*. Корректор *Н. В. Григорьева*. Компьютерная верстка *М. В. Филипповой*.

Изд. лиц № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 02.04.02. Формат 84x108 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 4,2. Учетно-изд. л. 2,26. Тираж 2000 экз. Заказ № К-3210. Изд. № 19.

РГУП «Чувашское книжное издательство», 428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Отпечатано в РГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.